25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 ИЮНЬ 14 ВЫРСАРНИКУН 137(6072) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ИНФОРМАЦИЛЛĔ ПĔЛТЕРÿ

1942 çулти июнĕн 12—13-мĕшсенче ВКП(б) Чăваш Обкомĕн черетлĕ XI-мĕш Пленумĕ пулса иртрĕ.

Пленум çак ыйтусене сÿтсе-яврĕ:

1. Сталин юлташăн майăн пĕрремĕшĕнчи приказне пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе парти организацийĕсем умĕнче тăракан черетлĕ задачăсем çинчен тата социализмлă ăмăртăва сарса ярасси çинчен.
2. Çураки итогĕсем çинчен, калчасене пăхса усрасси, тырпулсене пуха кĕртесси тата ялхуçалăх продукцийĕсем хатĕрлесси çинчен.

Çак ыйтусем тăрăх Пленум тивĕçлĕ решенисем йышăнчĕ.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕ.

Оборонăн Государственный Комитечĕн Председательне Сталин юлташа

ХАКЛА ИОСИФ ВИССАРИОНОВИЧ!

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн пленумĕ, республикăри партипе совет активĕпе пĕрле, Сирĕн майăн 1-мĕшĕнчи приказа пурнăçа кĕртес тĕлĕшри черетлĕ задачăсене тата çураки итогĕсене сÿтсе-явма пуçтарăнса, [illegible] Германи тата Европăри унпа пĕрле вăрçакан çĕршывсене хирĕç пыракан вăрçăра ССР Союзĕпе Великобритани союзлă пуласси, [illegible] тата агрессие хирĕç вăрçас ĕçре пĕр-пĕрне пулăшмалли принципсем çинчен Совет Союзĕпе Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен хушшинче тунă Килĕшÿсене [illegible].

Çак Договорпа Килĕшÿ пĕтĕм тĕнчери историре пысăк вырăн йышăнса тăрассĕ. Вĕсем, СССР, Великобританипе тата Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен халăхĕсем хушшинчи туслăха татах та вăйлăрах çирĕплетессĕ, пĕтĕм тĕнчери ирĕклĕхе юратакан халăхсен ретне, юншăн хапсăнакан фашизма хирĕç кĕрешекенсен ретне çĕнĕ вăй хушассĕ.

Молотов юлташ Лондонра тата Вашингтонра каланă вăхăтра 1942 çулта Европăра иккĕмĕш фронт тăвас тĕлĕшпе [illegible] пирĕн республикăри [illegible] кĕтес илчĕ.

Сире, Сталин юлташ, Чăваш республикинчи большевиксем çакна шантарса калассĕ: 1942 çулта нимĕçсен фашистла захватчикĕсене пĕтĕмпех аркатса тăмалли [illegible] Совет çĕрне гитлерла ирсĕрсенчен тасатмалли [illegible] Эсир панă приказа пурнăçа кĕртме эпир мĕнпур вăя хуратпăр.

ССР Союзĕнчи, Великобританири тата Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенчи ирĕклĕхшĕн кĕрешекен халăхсен туслăхĕ сывă пултăр!

Сывă пултăр пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар!

Сывă пултăр пирĕн гениллĕ çулпуç тата полководец Сталин юлташ!

Агрессие хирĕç вăрçас ĕçре пĕр-пĕрне пулăшса тăмалли принципсем çинчен Совет Союзĕпе Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем пĕр-пĕринпе Килĕшÿ туса алă пусни

1942 çулти июнĕн 11-мĕшĕнче Вашингтонра агрессие хирĕç вăрçас ĕçре пĕр-пĕрне пулăшса тăмалли принципсем çинчен Совет Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительствипе Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Правительстви хушшинче тунă Килĕшĕве алă пуснă. Совет Союзĕн Правительстви ячĕпе çак Килĕшĕве Совет Союзĕн Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенчи Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ М. М. Литвинов алă пуснă, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Правительстви ячĕпе — США секретарĕ г. Кордел Хэлл алă пуснă.

Çав алă пуснă Килĕшÿре США Президенчĕ çакна тепĕр хут çирĕплетсе парать: [illegible]

[illegible] 1942 çулти февралĕн 23-мĕшĕнче Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсемпе Великобритани хушшинче тунăччĕ.

Килĕшÿ алă пуснă пĕрлех США Государственнăй секретарĕ г. Корделл Хэлл тата СССР Посолĕ М. М. Литвинов пĕр-пĕрин патне нотăсем янă: [illegible] Аяларах Килĕшĕвĕн текстне пичетлетпĕр:

Агрессие хирĕç вăрçас ĕçре пĕр-пĕрне пулăшса тăмалли принципсем çинчен Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительствипе Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Правительстви хушшинче тунă

К И Л Ĕ Ш Ÿ

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительствипе Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Правительстви çакăн пек каланине: эпир пирĕнпе пĕрпек шухăшлакан ытти мĕнпур государствăсемпе тата халăхсемпе пĕрле пĕр ĕç туса пыратпăр, тĕрĕслĕхлĕ тата çирĕп мирĕн никĕсĕсене тумалли ĕç, хамăршăн тата ытти мĕнпур халăхсемшĕн законлă йĕрке туса памалли ĕç тăватпăр, тесе каласа панине шута илсе;

Тата Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительствипе Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Правительстви, Пĕрлешнĕ Нацисен 1942 çулти январĕн 1-мĕшĕнче тунă Декларацине алă пуснă правительствăсем пулса тăрса, 1941 çулти августăн 14-мĕшĕнче Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Президенчĕпе Великобританири Пĕрлешÿллĕ Королевствăн тата Çурçĕр Ирландин Премьер-Министрĕ пĕрле тунă Декларацире (Атлантика Хартийĕ ятлăскерте, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительстви те хутшăннăскерте) кăтартса панă тĕллевсемпе принципсен пĕтĕмĕшле программи çине алă пуснине шута илсе;

Тата Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Президенчĕ, Конгресăн 1941 çулти мартăн 11-мĕшĕнче йышăннă Актне малалла сарса, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзне агрессие хирĕç хÿтĕлени вăл Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсене хÿтĕлемешкĕн питĕ кирлĕ пулса тăрать тесе каланине шута илсе;

Тата Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем Советлă Социализмлă Республикăсен Союзне агрессие хирĕç тăрас ĕçре халиччен те тата халĕ те пулăшса тăнине шута илсе;

Тата малта кăтартнă пулăшăва Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительстви мĕнле условисемпе илсе тăнине тата Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем çав пулăшу вырăнне илмелли усăлăхсене мĕнле условисемпе илсе тăмаллине татăклăн кăтартса парассине ак çак вăхăта хăварсан: оборонăлла пулăшăвăн пысăкĕшĕ паллă пулса тăраччен тата событисен юхăмĕ татăклă условисемпе усăлăхсене (Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн тата Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен интересĕсемпе килĕшсе тămаласкерсене тата пĕтĕм тĕнчере мир туса хурса ăна сыхласа тăма пулăшмаласкерсене) уçăмлăрах та паллăрах туса хурас вăхăта хăварсан аванрах пулнине шута илсе;

Тата Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительствипе Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Правительстви иккĕшĕ те оборонăлла пулăшу парас тĕлĕшпе тата малта асăннă условисене туса хунă чухне шута илмелли хăшпĕр шухăшсем тĕлĕшпе халь малтанлăха çак Килĕшĕве тума хапăл тунине, çавăн пек Килĕшÿ тума мĕн кирлине пурне те тивĕçлĕ йĕркепе татса панине, çавăн пек Килĕшÿ тăвасчĕн Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн законĕсем тăрăх та, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен законĕсем тăрăх та тумалла пулнă мĕнпур актсене, условисене тата формальноçсене пурне те тивĕçлĕ йĕркепе туса хунине шута илсе;

Аяла алă пуснă çынсем, çак ĕçе тума хăйсен Правительствисенчен тивĕçлĕ йĕркепе Полномочисем илнĕскерсем, çакăн пирки калаçса татăлнă:

1-мĕш Статья.

Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Правительстви Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительствине оборонăлла материалсем, оборонăлла пулăшусем тата оборонăлла информацисем, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Президенчĕ пама ирĕк панисене, малалла та парса тăрать.

2-мĕш Статья.

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительстви Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсене хÿтĕлеме тата ăна тĕреклетсе пыма малалла та пулăшса пырать тата ăна хăй пултарнă таран материалсем, пулăшу, льготăсем, информаци парса тăрать.

3-мĕш Статья.

Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Конгресĕн 1941 çулти мартăн 11-мĕшĕнче йышăннă Акчĕ тăрăх илнĕ кирек мĕнле оборонăлла материала та, оборонăлла информацие те Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительстви, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Президенчĕ ирĕк памасăр, хăйĕн вырăнлă çыннисемсĕр, служащийĕсемсĕр е агенчĕсемсĕр пуçне урăх никама та формально та, фактически те памасть тата вĕсемпе усă курма ирĕк памасть.

4-мĕш Статья.

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительствине мĕнле те пулсан оборонăлла материал е оборонăлла информаци панă хыççăн Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен пĕр-пĕр гражданинĕн, малта асăннă оборонăлла материалсемпе е информаципе çыхăнса тăракан патентлă правăсем пуррин, мĕнпур прависене пĕтĕмпех тивĕçтермешкĕн Совет Правительствин мерăсем йышăнмалла е укçа тÿлемелле пулса тăрсан, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительстви, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Президенчĕ ыйтнă тăрăх, çавăн пек мерăсем йышăнать тата тÿлемеллисене тÿлет.

5-мĕш Статья.

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительстви çак Килĕшÿ тăрăх илнĕ оборонăлла материалсенчен хăшĕсем хальхи чрезвычайнăй лару-тăру пĕтнĕ çĕре пĕтмессĕ, çухалмассĕ е пĕтĕмпех ĕçе каймассĕ тата хăшĕсем, Президент кăтартнă тăрăх, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсене е Хĕвеланăçĕнчи çурчăмăра хÿтĕлеме кирлĕ пулма пултарассĕ е вĕсемпе Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем мĕнле майпа та пулин усă курма пултарассĕ,—çавсене Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительстви, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Президенчĕ кăтартнă тăрăх, хальхи Чрезвычайнăй лару-тăру пĕтсен Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсене тавăрса парать.

6-мĕш Статья.

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительстви Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсене памалли усăлăхсене татăклăн кăтартса панă чухне çаксене пĕтĕмпе шута илмелле: 1941 çулти мартăн 11-мĕшĕнчен вара Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительстви панă, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен ячĕпе Президент илнĕ мĕнпур пурлăха, пулăшăва, информацие, льготăсене тата ытти усăлăхсене пурне те шута илмелле.

7-мĕш Статья.

Конгресăн 1941 çулти мартăн 11-мĕшĕнчи Акчĕ тăрăх илнĕ пулăшу вырăнне Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительствин Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсене мĕнле усăлăхсем памаллине татăклăн кăтартса панă чухне вăл усăлăхсен условийĕсем çакăн пек пулмалла: çак иккĕ çĕршыв хушшинче пыракан суту-илĕве вĕсем кансĕрлесе ан тăччăр çеç мар, вĕсем, йăлтах урăхла, çак çĕнĕ çĕршыв хушшинчи вĕсемшĕн иккĕшиншĕн те усăллă экономикăлла çыхăнусене асăлатса пыма тата тĕнчери экономикăлла çыхăнусене лайăхлатса пыма пулăшса тăмалла пулччăр. Çавăнпа та вĕсем Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсемпе Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕ пĕр-пĕринпе килĕштерсе çакăн пек ĕçсем, хăйсемпе пĕр пек шухăшлакан мĕнпур ытти государствăсем те хутшăнма пултармалли çакăн пек ĕçсем тума пултарассине шута илмелле: пĕтĕм тĕнчере тата кашни государствăра тивĕçлĕ мерăсем йышăннипе, производствăна, ĕç вăййĕпе усă курассине, тавар улăшăвне, таварпа усă курассине сарса пымалли ĕçсем тума пултарассине (çакă вăл мĕнпур халăхсен ирĕклĕхĕпе лайăх пурнăçăн материальнăй никĕсĕ пулса тăрать), пĕтĕм тĕнчери суту-илÿре государствăсем пĕр-пĕрне сиен тума тăрăшассине пĕтерсе лартмалли, пошлинăсене тата суту-илÿри ытти кансĕрлекен хÿмесене чакармалли, пĕтĕмĕшпе илсен — Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Президенчĕпе Пĕрлешÿллĕ Королевствăн Премьер-Министрĕ 1941 çулти августăн 14-мĕшĕнче тунă Декларацире, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительстви те хутшăннă Декларацире кăтартса панă мĕнпур экономикăлла тĕллевсене пурнăçламалли ĕçсем тума пултарассине шута илмелле.

Малта асăннă тĕллевсене пурнăçламалли чи лайăх майсене, çав правительствăсем хăйсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçленипе пурнăçламаллисене тата хăйсемпе пĕр пек шухăшлакан правительствăсемпе пĕрле килĕштерсе ĕçлемелли чи лайăх майсене хальхи пуç пулса тăракан экономикăлла условисене шута илсе кăтартса парас шутпа икĕ Правительство хушшинче мĕн май килнĕ таран часрах калаçу пуçланать.

8-мĕш Статья.

Çак Килĕшÿ паянах ĕçе кĕрет. Вăл икĕ правительство пĕр-пĕринпе калаçса татăлмалли срокчен пырать.

Ку килĕшĕве Вашингтонра пичетсем хурса 1942 çулти июнĕн 2-мĕшĕнче икĕ экземпляр çырса хатĕрленĕ.

МАКСИМ ЛИТВИНОВ
Советлă Социализмлă республикăсен Союзĕн Вашингтонри Посолĕ.

КОРДЕЛЛ ХЭЛЛ
Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Государственный Секретарĕ.

Колхозра хастарлăн ĕçлесе фронта пулăшар

Ялхуçалăхĕн çуллахи ĕçĕсене тунă çĕрте çамрăксем, шкул ачисем пысăк вăй пулса тăрассĕ. Иртнĕ çулсен опычĕ çамрăк ачасем лашапа, машинăпа ĕçлемелли ĕçсене те тума пултарнине кăтартса пачĕ. Çавăнпа çамрăксене колхоз производствине кăçал уйрăмах анлăн явăçтармалла.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн постановленийĕнче çамрăксем валли те минимум кăтартса панă. 12—16 çулхи ачасем çулталăкне 50 ĕçкунĕ тума тивĕçлĕ. Колхоз правленийĕсем вĕсене хăйсене уйрăм ĕç кĕнекисем парассĕ. Ку ĕнтĕ ачасене ялхуçалăх ĕçĕнче татах та лайăхрах тăрăшса ĕçлеме хавхалантарать.

Пĕчĕкрех ачасем нумайĕшĕ çулла пионерсен лагерĕсене, ачасен санаторийĕсене каяççĕ. Унта чи малтан сывлăх енĕпе начартарах ачасене, тăлăхсене тата Хĕрлĕ Çар ретне кайнă юлташсен ачисене яраççĕ.

Вăтам тата туллимар вăтам шкулсенчи 6—10-мĕш классенче вĕренекенсем, СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă тăрăх, кăçал пурте вăйлă тырпула пуçтарма колхоз уйхирне тухаççĕ.

Ялсенчи çамрăк ачасем нумайĕшĕ вĕренÿ çулне вĕçленĕ хыççăнах колхоз ĕçне кÿлĕннĕ. Кармалти «Звезда» колхозри (Октябрьски район) пионерсемпе шкул ачисем колхоз производствине питех те активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ. Вĕсем кирек мĕнле ĕçе те пысăк хаваслăхпа тăваççĕ. Халĕ вĕсем тислĕк тăкаççĕ, лашасене пăхаççĕ. Кашниех çитес вĕренÿ çулĕ пуçланиччен 100 ĕçкунĕнчен кая мар тума обязательство илнĕ. Вĕсенчен хăшпĕрисем В. Смирнов 60 ĕçкунĕ, Н. Пчельников 45 ĕçкунĕ, В. Дмитриев 40 ĕçкунĕ, Г. Смирнов 30 ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ те ĕнтĕ.

Шăхасанти вăтам шкулта вĕренекенсенчен колхозсене ĕçлеме кайма 24 звено тата 10 бригада организациленĕ. Халĕ Шăхасанти «Хĕрлĕ Октябрь» колхозăн уйхир ĕç бригадисенче 150 вĕренекен, пахча-çимĕç бригадинче 19 вĕренекен ĕçлет. Шкул ачисен бригадисене колхоз правленийĕ колхозниксен бригадисем çумне çирĕплетнĕ. Ачасен бригадисене учительсем ертсе пыраççĕ. Шкул ачисем пысăк пултарулăхпа, хастарлăхпа ĕçлеççĕ.

Хуласенчи шкулсен аслă класĕсенче вĕренекенсем те кăçал ялхуçалăх ĕçĕсене вĕренчĕç. Вĕсем тракторпа, комбайнпа, ялхуçалăхĕн тата ытти машинисемпе паллашрĕç, агротехника тĕлĕшпе пĕлÿ илчĕç. Халĕ вĕсем хăйсен пĕлÿне колхозсемпе совхозсен хирĕсенче ĕçленĕ çĕрте кăтартаççĕ. Шупашкар хулинчи шкулсенчен 1.200 вĕренекен хула çывăхĕнчи совхозсене тата Шупашкарпа Октябрьски районсенчи колхозсене ĕçлеме каяççĕ. Халĕ хулари çутĕç пайĕпе ВЛКСМ комитечĕ вĕренекенсене отрядсене уйăраççĕ, вĕсене ертсе пыма учительсене çирĕплетеççĕ. Хулари 2, 3, 7-мĕш номерлĕ шкулсем ĕçе пуçăннă та ĕнтĕ. 2-мĕш номерлĕ шкултан 60 ача 16-мĕш номерлĕ совхозра хĕрÿллĕн ĕçлеççĕ: çум çумлаççĕ, пахча-çимĕçсене шăвараççĕ. Вĕсене аслă вожатăй Е. Семенова юлташ ертсе пырать.

Çамрăк ачасем уйхире ĕçлеме тухнă май, комсомол организацисем умне пысăк та ответлă задача тухса тăрать. Колхоза каякан ачасем валли апат çимелли, выртса тăмалли вырăнсем, ĕçлемелли инвентарьсем хатĕр пулччăр. Пĕр кун та ачасен усăсăр ан ирттĕр. Çăмăрлă кунсенче вĕренекенсем красноармеецсен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе ĕçлеччĕр, вутă кÿрсе е çурса паччăр. Шкула çитес вĕренÿ çулне хатĕрленме пулăшчăр, колхоз ферминчи выльăхсене пăхчăр. Колхозниксене хаçатсем вуласа ăнлантарччăр, вулав çурчĕсене, библиотекăсене йĕркелеччĕр.

Хулари шкул ачисем колхозсене ĕçлеме кайма хĕрсех хатĕрленеççĕ. МТС политотдел начальникĕсен комсомол енĕпе ĕçлекен помощникĕсен тата ялсенчи комсомолецсен вĕсене тивĕçлипе кĕтсе илмелле. Ĕçре мĕн кирлине малтанах хатĕрлесе хумалла.

Ĕçре пысăк çитĕнÿсем тăвас тĕлĕшре социализмлă ăмăрту пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çавăнпа ĕнтĕ Свердловск облаçĕнчи Ирбит районĕнчи шкулсем социализмлă ăмăртăва тухнă, колхоз производствинче активлăн хутшăнса ĕçлеме пулса хăйсем çине конкретнăй обязательствăсем илнĕ. Ирбитри учительсемпе вĕренекенсем Совет Союзĕнчи шкулсене пурне те ăмăртăва хутшăнма чĕнчĕç. Халĕ Совет Союзĕнчи нумай облаçсем вĕсен чĕнĕвне ырласа ăмăртăва хутшăнаççĕ. Пирĕн республикăри шкулсен те социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ямалла. Кашни шкул, кашни вĕренекен хăй çине конкретнăй обязательство илтĕр, ăна пурнăçлатăр. Илнĕ обязательствăсем мĕнле пурнăçланса пынине тĕрĕслесси, ăмăртăва ертсе пырасси — комсомол организацисен задачи.

ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Т. Г. Герасимов юлташа СССР Заготовкăсен Халăх Комиссариачĕн Чăваш АССР-ĕнчи Уполномоченнăйĕ пулма уйăрса лартасси çинчен

Тимофей Герасимович Герасимов юлташа СССР Заготовкăсен Халăх Комиссариачĕн Чăваш АССР-ĕнчи Уполномоченнăйĕ пулма уйăрса лартас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиум Секретарĕн ĕçĕсене тăваканĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1942 çулти июнĕн 13-мĕш.

ХРОНИКА

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх Димитрий Яковлевич Митьков юлташа, вăл урăх ĕçе куçнă пирки, СССР Заготовкăсен Наркомачĕн Чăваш АССР-ĕнчи Уполномоченнăйĕн обязанноçĕсенчен хăтарнă.

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ М. М. Литвинов Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Государственный Секретарьне Корделл Хэлл господина панă нота

Сирĕн Превосходительство,

Паянхи кун пирĕн икĕ Правительство хушшинче агрессие хирĕç пыракан вăрçăра пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен калакан принципсем тăрăх Килĕшÿ туса алă пуснине май, çак Килĕшÿ малтан пирĕн икĕ Правительство çавăн çинченех тунă икĕ Килĕшĕве улăштарать тата вĕсене пăрахăçа кăларать тесе эпир калаçса татăлнине çирĕплетсе паратăп. Çав малтан тунă икĕ Килĕшÿрен чи юлашки Килĕшĕвĕ Президентпа г. Сталин 1942 çулти февралĕн 13-мĕшĕнче, февралĕн 20-мĕшĕнче тата февралĕн 23-мĕшĕнче пĕр-пĕрин патне çырнă çырусенче палăрса тăрать.

Йышăнăр тата ытти те.

МАКСИМ ЛИТВИНОВ.
Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Вашингтонри Посолĕ.

ВАШИНГТОН, 1942 çулти июнĕн 11-мĕш.

Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Государственный Секретарĕ г. Корделл Хэлл Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ М. М. Литвинов патне янă нота

Сирĕн Превосходительство,

Паянхи кун пирĕн икĕ Правительство хушшинче агрессие хирĕç пыракан вăрçăра пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен калакан принципсем тăрăх Килĕшÿ туса алă пуснине май, çак Килĕшÿ малтан пирĕн икĕ Правительство çавăн çинченех тунă икĕ Килĕшĕве улăштарать тата вĕсене пăрахăçа кăларать тесе эпир калаçса татăлнине çирĕплетсе паратăп. Çав малтан тунă икĕ Килĕшÿрен чи юлашки Килĕшĕвĕ Президентпа г. Сталин 1942 çулти февралĕн 13-мĕшĕнче, февралĕн 20-мĕшĕнче тата февралĕн 23-мĕшĕнче пĕр-пĕрин патне янă çырусенче палăрса тăрать.

Йышăнăр тата ытти те.

КОРДЕЛЛ ХЭЛЛ
Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Государственный Секретарĕ.

ВАШИНГТОН, 1942 çулти июнĕн 11-мĕш.

Ф. Д. Рузвельт господин И. В. Сталин патне янă послани

Эсир господин Молотова манпа курнăçма янăшăн эпĕ Сире чĕререн тав тăватăп тата вăл Совет Союзне каялла чиперех таврăнни çинчен пĕлтерессе çавтери хумханса кĕтсе тăратăп. Вăл пирĕн пата килсе кайни питех те кăмăллă пулчĕ.

И. В. Сталин Ф. Д. Рузвельт господина панă ответ

Совет Правительстви те, Сирĕн пекех, господин Президент, В. М. Молотов США-на çитсе килнин результачĕсем питех те кăмăллă пулчĕç тесе шутлать.

Май пулнипе усă курса, Сире, господин Президент, В. М. Молотовпа унăн юлташĕсене вĕсем США-ра пурăннă чухне Эсир лайăх йышăннăшăн Совет Правительстви ячĕпе чĕререн тав тăватăп.

В. М. Молотов паян Мускава таврăнчĕ.

Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов г. У. Черчилль патне янă телеграмма

Г. Уинстон Черчилле,
Великобританин Премьер-Министрне,
ЛОНДОН.

Великобританирен тухса кайнă май, Сирĕн çĕршывра мана чĕререн тата савăнăçлăн хăналантарнăшăн Британи Правительствине тата Сире Пĕтĕм кăмăлран тав тума тивĕçлĕ тесе шутлатăп.

Совет Союзĕпе Великобритани хушшинче Союзлă пуласси çинчен йышăннă Договор тата 1942 çулта Европăра иккĕмĕш фронт тăвас ыйтусем тăрăх калаçса татăлни гитлерла Германие пĕтĕмĕшпех çĕмĕрсе тăкассине хăвăртлатĕç тесе, эпир Договор туса калаçса татăлни пирĕн халăхсем тачăн çыхăнса тăма тата пĕр-пĕринпе туслă пулса ĕçлеме пĕтĕм кăмăлран тăрăшнине кăтартса парать тесе эпĕ шанса тăратăп.

Сире, г. Премьер-Министр, тата Великобритани халăхĕсене эпĕ ырă сунни йышăнăр.

В. МОЛОТОВ.

Ютçěршыв Ěçěсен Халăх Комиссарě В. М. Молотов г. А. Иден патне янă телеграмма

Г. Антони Идена,
Великобританин Ютçěршыв Ěçěсен Министрне,
ЛОНДОН.

Великобританирен тухса каяс умěн, Лондонри калаçусем вăхăтěнче, Союзлă пуласси тата вăрçăра пěр-пěрне пулăшасси çинчен ССР Союзěпе Великобритани хушшинче Договор туса алă пуснине ăнăçлăн вěçленнě калаçусем вăхăтěнче, Эсир туслă пулса ěçленишěн Сире чěререн тав тума май пулнипе эпě усă куратăп.

Çак Договор пирěн çěршывсем хушшинчи Союзлă тата туслă çыхăнусене малалла аталантарса пымалли çирěп никěс пулса тăрасси пирки, вăл гитлерла Германие хирěç вăрçнă вăхăтра та, çавăн пекех вăрçă хыççăнхи тапхăрта та ирěклěхе юратакан халăхсен пěрлехи ěçěшěн усăллă пулас пирки эпě иккěленсе тăмастăп.

В. МОЛОТОВ.

Ютçěршыв Ěçěсен Халăх Комиссарě В. М. Молотов г. Ф. Д. Рузвельт тата г. К. Хэлл патне янă телеграммăсем

Господин Франклин Д. Рузвельта,
Америкăри Пěрлешÿллě Штатсен Президентне,
ВАШИНГТОН.

Тăван çěршыва тухса кайнă май, эпě Сире, господин Президент, татах тепěр хут çакна каласа пěлтерестěп: эпě Сирěнпе тěл пулни, гитлерла Германие çěмěрсе тăкас ěçе хăвăртлатас тата пирěн çěршывсем вăрçă хыççăнхи тапхăрта ирěклěхе юратакан мěнпур халăхсен интересěсемшěн пěр-пěринпе килěштерсе çыхăнса тăрас тěлěшпе 1942 çулта Европăра иккěмěш фронт тăвассин вăраха яма çук задачисем пирки эпир пěтěмěшпех калаçса татăлни мана питех те савăнтарать.

Эсир тата Америкăри Пěрлешÿллě Штатсен Правительстви мана чěререн йышăнса хăналантарнăшăн Сире пěтěм кăмăлран тав тăватăп, Сире хăвăра тата Америкăри Пěрлешÿллě Штатсен халăхне чěререн ырă сунатăп.

В. МОЛОТОВ.

Господин Корделл Хэлла,
Государственный Секретаре,
ВАШИНГТОН.

Тăван çěршыва таврăнас умěн Сире, господин Государственный Секретарь, Вашингтонра пулнă калаçусене Эсир хăвăр хутшăннăшăн тата мана хамăн миссие пурнăçа кěртнě чухне пулăшнăшăн çавтери пысăк кăмăлпа тав тăватăп.

Пирěн пěрлехи ěç валли тăвакан Сирěн тухăçлă ěçре ăнăçу пултăр тесе эпě Сире ырă суннине йышăнма ыйтатăп.

В. МОЛОТОВ.

Совет Союзěпе Канада хушшинче дипломатиллě çыхăнусене йěркелесе ярасси çинчен тунă Килěшÿ

Июнěн 12-мěшěнче Лондонра ССР Союзěпе Канада хушшинче тÿрремěнех дипломатиллě çыхăнусем йěркелесе ярасси çинчен Килěшÿ туса алă пуснă. ССР Союзěн ячěпе Килěшÿ çине ССР Союзěн Великобританири Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолě И. М. Майский, Канада ячěпе — Канадăн Англири Верховнăй Уполномоченнăйě г. Мэссей алă пуснă.

Аяларахра Килěшÿ текстне пичетлетпěр:

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзěн Правительствипе Канада Правительстви хушшинче тунă Килěшÿ

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзěн Правительствипе Канада Правительстви çакăн пирки килěшрěç:

1. Икě Правительстви те тÿрремěнех дипломатиллě çыхăнусем тума тата пěр-пěрин патне посланниксем яма килěшрěç.

2. Çак Килěшÿ ăна алă пуснă хыççăн çийěнчех вăя кěрет тата ăна ратификацилеме кирлě мар.

3. Çак Килěшěве икě экземплярпа çырнă, кашнинех вырăс тата акгличанин чěлхипе çырнă. Икě текстĕ те пěр пекех вăйра пулаççě.

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзěн Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолě МАЙСКИЙ.

Канадăн Англири Верховнăй Уполномоченнăйě МЭССЕЙ.

ЛОНДОН, 1942 çулти июнěн 12-мěш.

Совет халăхě ССР Союзěпе Великобритани тата Америкăри Пěрлешÿллě Штатсем хушшинчи туслăх çирěпленнине хěрÿллěн саламлать

Гитлеризм часах хăйне валли вилěм тупать

ÇУРÇĚР-ХĚВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĚ, июнěн 12-мěш. **(ТАСС спецкорě).** Н-ски чăсăн комиссарě Ушаков юлташ боецсемпе командирсене ССР Союзěпе Великобритани хушшинче договор туни çинчен пěлтернě чухне пěтěмпех кас пулса çитнě. Тул çутălнă тěле митинг пухăннă. Çак митинг историллě договора чěререн ырлакан демонстраци пулса тăнă.

— Çак договорта эпир, фронтовиксем, — тенě красноармеец Федоревский, — Сталин юлташ пирěн çěршыв ытти çěршывсемпе çыхăнса тăрасси нихăçанхинчен те ытла тěрекленсе, ÿссе кайни çинчен каланă сăмахсем питех те тěрěс пулнине куратпăр.

Гитлеризм часах хăйне валли вилěм тупě. Эпир тăшмана татăклăнах çěнтерес çул çинче тăракан кирек мěнле йывăрлăха та чăтса ирттерме хатěр. Ирěклěхе юратакан тěнчери виçě пысăк çěршывăн пěрлешÿллě вăйěсем çитес çывăх вăхăтрах тăшмана хаяррăн çěмěрсе тăкěç.

Митинга пухăннисем аслă полководец И. В. Сталин ячěпе виçě хутчен сывлăх сунса кăшкăраççě.

Йышăннă резолюцире боецсем, командирсем, политработниксем ССР Союзěпе Великобритани хушшинче тунă договора пурте пěр кăмăллăн ырларěç, туслă Великобританипе США халăхěсене чěререн саламларěç.

И. ДЕНИСОВ.

Фашистсене пěтерсе тăкас вăхăт çывхарать

ÇĚМĚРЛЕ, июнěн 12-мěш. **(Телефонпа, хамăр корр.).** Ěнер районри ěççыннисем, В. М. Молотов юлташ Лондонра тата Вашингтонра пулни çинчен тата Совет Союзěпе Великобритани пěр-пěринпе тунă Договорăн текстне радиопа панине пысăк интереспа итлерěç. Паянпа ěнер предприятисемпе артельсенче ěç пěтнě хыççăн калаçусем пулса иртрěç. Рабочисемпе работницăсем Совет Союзěпе Великобритани хушшинче тунă договора çирěплетсе алă пуснине тулли кăмăлпа ырлаççě.

— Икě пысăк держава пěр-пěринпе тунă Договор гитлерла захватчиксене пěтěмпех аркатса тăкассине çывхартать. Часах акă иккěмěш фронт уçăлě. Ун чухне палач Гитлер хăйěн кунçулě пěтсе çитнине лайăххăх туйса илě. Çав договора эпир, рабочисем, пěтěм кăмăлтан ырлатпăр, — терě «Большевик» заводри вата рабочи Василий Брыдков юлташ.

Договора ырласа, рабочисемпе работницăсем татах та тухăçлăрах ěçлеме, июнь уйăхěнчи производство планне ирттерсе тултарма обязательствăсем илеççě.

— Эпир май уйăхěнчи плана 106 процент тултарнă. Пирěн хушăра нормăна тултарман рабочи çук. Ăмăртăва сарса пырса, эпир ку уйăхра тата пысăкрах çитěнÿ тума пулатпăр, — терě комбинатри Станюлий юлташ ертсе пыракан цехри стахановецсем.

Х. ЛИСИН.

Самолетсен „Осоавиахим Чувашии" звенине тума

СĚНТĚР. Районри колхозсенче, учрежденисемпе предприятисенче Ишлей районěнчи хěрарăмсен подразделенийě самолетсен «Осоавиахим Чувашии» звенине тума чěнсе калании сÿтсе яваççě. Чěнěве сÿтсе явнă хыççăн «Красный Октябрь» колхозра 1.500 тенкě, «Первое мая» колхозра 3.500 тенкě, «Коммунар» колхозра 500 тенкě укçа пухăннă. Райпотребсоюзра ěçлекенсем самолетсен звенине тума 465 тенкě, райцентри çамрăксен подразделенийě 780 тенкě укçа пухса панă. Сěнтěрти больницăра, ВКП(б) райкомěнче ěçлекенсем самолетсен «Осоавиахим Чувашии» звенине тума пěр кунхи ěçукçине пама пулнă.

ТЕПЕЕВ,
ВКП(б) райкомěн çарěç отделěн заведующийě.

Совет Информаци Бюровěнчен

Июнěн 12-мěшěнчи каçхи пěлтерÿ

Июнěн 12-мěшěнче Харьков енче пирěн войскăсем противникăн наступленине тăвакан танкěсемпе пехотине хирěç оборонăллă çапăçусем туса пынă тата хăйсем те нимěçсен фашистла войскисене пыра-пыра çапнă.

Фронтăн Севастополь участокěнче çаплах хаяр çапăçусем пынă. Пěр кун хушшинче нимěçсен 50 танкне пěтерсе тăкнă тата 12 танкне çěмěрнě, артиллерин тата миномётсен 10 батарейине пěтерсе тăкнă. Нимěçсен пехоти 3 полк таран тата пěр эскадрон кавалери пěтнě.

Фронтăн ытти участокěсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Июнěн 11-мěшěнче пирěн авиацин чаçěсем фронтăн тěрлě участокěсенче нимěçсен 35 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 253 автомашинине, боеприпассем тиенě 80 лавне, горючи тултарнă 19 автоцистернине, 63 полевой тата зенитнăй орудине, миномётсен 5 батарейине, 9 прожекторне пěтерсе тăкнă е сиенленě, чугунçул çинчи 74 вагона çěмěрнě, противникăн пехотине 4 батальон ытла сапаласа янă, вěсенчен пěр пайне пěтерсе тăкнă.

* * *

Харьков енчи участоксенчен пěринче пирěн танкистсемпе артиллеристсем противникăн наступлени туса пыракан танкěсен пысăк ушкăнне хирěç çапăçма тытăннă. Пěр кун хушши пынă вăйлă çапăçура нимěçсен 60 танкне пěтерсе тăкнă е çěмěрнě.

* * *

Кěçěн лейтенантăн Бурдыгинăн подразделенине хирěç (Хěвеланăç фрончě) нимěçсем хăйсен пехотине 800 çын ытла наступление кěртсе янă. Пирěн боецсем противникăн атакисене 7 сехет хушши чарса тăнă. Хăйсен салтакěсемпе офицерěсем 400 çынна яхăн вилсе пěтсен, гитлеровецсем малалла куçма хăтланма пăрахнă.

* * *

Брянск фрончěн участокěсенчен пěринче кěрешекен пирěн часть нимěçсен миномёчěсен пěр батарейине, 3 орудине пěтерсе тăкнă, противникăн 2 блиндажěпе пěр наблюдательнăй пунктне çěмěрнě. Çапăçу хирěнче нимěç салтакěсемпе офицерěсен 140 вилли выртса юлнă.

* * *

Пирěн боецсен Кондрашов юлташ командир пулса ертсе пыракан ушкăнě икě уйăх хушши противникăн тылěнче çапăçнă. Çав вăхăт хушшинче пирěн боецсем чугунçул çинчи 7 состава ÿпěнтерсе янă, унта вара паровозсемсěр пуçне 85 вагонпа платформа пěтнě, нимěçсен 4 танкне, 10 автомашинине пěтерсе тăкнă, телефон кабельне 30 километра яхăн касса татнă тата нимěçсен салтакěсемпе офицерěсене 600 çынна пěтерсе тăкнă.

* * *

Çурçěрте кěрешекен пирěн пěр чаçри снайперсем уйăх хушшинче 213 белофинна вěлернě. Уйрăмăнах хăйсене Куксин, Шелухин тата Сидорников юлташсем палăртнă. Вěсем çав вăхăт хушшинче кашниех 40-шер белофинна вěлернě.

* * *

Тузин лейтенантăн подразделенийěнчи зенитчиксем, пěр харăс тăвата хут персе, нимěçсен бомбардировщикне ÿкернě. Тăшман самолечěн экипажě пěтнě.

* * *

Украинăн нимěçсем оккупациленě районěсенчен пěринче кěрешекен партизансен К. юлташ ертсе пыракан отрячě 7 кун хушшинче 270 гитлеровеца пěтерсе тăкнă, венгрсен 105-мěш бригадинчи 4-мěш полкăн 1-мěш батальонне аркатса тăкнă, 59 оккупанта тыткăна илнě. Çав çапăçусенче партизансем нимěçсен 3 танкне пěтерсе тăкнă, 2 продовольстви складне çунтарса янă тата чугунçул линийě тăрăхěнче выртакан 4 кěпере сирпěнтерсе янă. Партизансем çакăн пек трофейăсем тытса илнě: 12 пулемет, миномет, винтовка патронěсем 2000 штука, 3 радиостанци, 2 кухня, 40 центнер сар çу, 20 пин çăмарта, 10 ещěк махорка, мотоцикл, 96 велосипед тата штабсен докуменчěсене тытса илнě.

* * *

Словаксен 1-мěш мотодивизийěнчи 21-мěш мотополкăн 7-мěш ротинче тăнă фельдфебель Михаил Сташо çапла каласа панă: «Словак салтакěсем Совет листовкисене питех те интересленсе вулаççě, вěсем хăйсем вырăссене кăмăлланине уççăнах палăртаççě. Анчах та нимěçсем пирěн кашни утăмах асăрхаса тăраççě. Словаки халăхě нимěçсене тăшман вырăнне хурать. Апрель уйăхěн вěçěнче Словакирен килнě салтаксем çапла каласа пачěç: Врашов хулинче словак салтакěсен эшелонне фронта янă чухне халăх поезда кăларса яма чарчě. Салтаксем вагонсенчен тухса саланма пуçларěç. Командованин вěсене ирěксěрех каялла казармăсене илсе каймалла пулчě. Вара полка темиçе кун иртсен тин, вăрттăн уйрăм ротăсемпе хуларан илсе тухрěç те хула тулашěнче поезд çине лартса эшелонпа фронта ячěç».

* * *

Совет Союзěпе Германи хушшинчи вăрçă фронтěнче аманнă нимěç салтакěсен чылай пайě госпитальсене çитиччен вилсе пěтет. Аманнă салтаксене турттаракан поездсем Смоленскран Варшавăна çитиччен 3 эрне таран каяççě. Сурансене çул çинче нихăçан та салатса çыхмаççě. Май уйăхěн варринче Смоленскран Варшавăна санитарнăй поезд янă. Унта аманнă салтаксем 400 çын пулнă. Поезд Варшавăна июнěн 2-мěшěнче çитнě. Анчах унта мěнпурě те 280 çын кăна тăрса юлнă. Ыттисем çул çинче вилнě.

* * *

В. М. Молотов юлташ Лондонра тата Вашингтонра пулни çинчен тата ССР Союзěпе Великобритани хушшинче гитлерла Германие тата Европăри унпа пěрле вăрçакан çěршывсене хирěç пыракан вăрçăра союзлă пуласси çинчен, вăрçă пěтнě хыççăн пěр-пěринпе килěштерсе ěçлесе пěр-пěрне пулăшса тăрасси çинчен тунă договор çинчен калакан хыпарсене Совет Союзěнчи халăхсем пысăк хавасланăхпа хапăл туса кěтсе илчěç.

Мускавра, Ленинградра, Горькинче, Куйбышевра, Свердловскра, Чкаловра тата пирěн çěршывăн ытти хулисенче те, Хěрлě Çар чаçěсенче, колхозсемпе совхозсенче паян митингсем пулса иртрěç, унта красноармеецсемпе командирсем, рабочисем, служащисем тата колхозниксем Совет Союзěпе Великобритани тата Америкăри Пěрлешÿллě Штатсен вăрçăри туслăхě çирěпленсе пынине хěрÿллěн саламларěç.

Июнěн 13-мěшěнчи ирхи пěлтерÿ

Июнěн 13-мěш ыран тенě чух çěрле фронтра паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Фронтăн Севастополь участокěнче нимěçсен фашистла войскисем питě пысăк çухатусем тÿсеççě. Юлашки кунсенче гитлеровецсем «тупă какайě» вырăнне ытларах та ытларах румынсемпе усă кураççě. Ěнер вěсем ÿсěр румын салтакěсен батальонне тăватă хутчен «психикăлла» атакăна кěртсе янă. Пăшалсемпе пулеметсенчен персе, пирěн боецсем сахалтан та 200 румына пěтерсе тăкнă. Румынсен аркатса тăкнă батальонěн юлашкийěсене хăйсен малтанхи позицийěсем çине хăваласа янă.

* * *

Çурçěр-Хěвеланăç фрончěн участокěсенчен пěринче кěрешекен пирěн часть противника хирěç çапăçса хăйěн позицийěсене лайăхлатнă. Пирěн боецсем нимěçсен 2 танкне, 3 орудине тата 8 автомашинине пěтерсе тăкнă. Çапăçу хирěнче противникăн салтакěсемпе офицерěсен 300 виллине çити выртса юлнă. Çакăн пек трофейăсем тытса илнě: 9 пулемет, 2 миномет, 20 ещěк патрон тата радиостанци. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Пирěн пěр чаçри зенитчиксем (Кăнтăр-Хěвеланăç фрончě) пěр кун хушшинче нимěçсен 4 самолетне персе ÿкернě.

* * *

Соболев юлташ ертсе пыракан пилěк разведчик боевой задание пурнăçланă вăхăтра гитлеровецсен пěр ушкăнне тěл пулнă. Кěске вăхăт хушши тытăçса илсе, пирěн боецсем 4 нимěç салтакне вěлернě, пěрне тыткăна илнě.

* * *

Снайперсем Григорий Абрамов, Захар Угаров, Александр Зайцев тата Василий Вихров икě эрне хушшинче нимěçсен 70 салтакěпе офицерне пěтерсе тăкнă.

* * *

У. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячě, Курск облаçěн нимěçсем оккупациленě районěсенчен пěринче кěрешекенскер, противникăн поездне ÿпěнтерсе янă. Крушени пулнă пирки 2 самолет, 12 оруди, пěр трактор тата нимěçсен фашистла оккупанчěсем 100 çынна çити пěтнě.

* * *

Вěлернě нимěç унтер-офицерě çумěнче (унăн хушаматне пěлме май килмен) ун патне амăшě çырнă çырăва тупнă. Çав çырура çапла каланă: «Сана Гербертпа çыру парса яма тěл килчě. Ку вăл питě пысăк телей, мěншěн тесен почтăпа янă çырура тěрěссине çырма юрамасть... Хăçан пěтерсе лартăр-ши эсир ку ăссăр-тěлсěр вăрçа? Пěр ушкăн кушташшăн юн тăкма чарăнма вăхăт мар-ши ěнтě сире? Эсир унта тепле пуль, анчах эпир кунта урăх чăтса тăраймастпăр. Эльва чирлě, вăл юнлă сурать, ăна кунне 12-шер сехет ěçлеттереççě. Çимелли нимěн те çук, черетсенче вěçě-хěррисěр тăратăн, анчах киле пушă сумкамах таврăнатăн».

* * *

Нимěçсен фашистла ирсěрěсем Ленинград облаçěнчи Корлово ялне çěмěрсе кěнě. Гитлерла бандитсем колхозниксен çурчěсене вут тěртнě, хреснсем хăйсен пурлăхěсене çăлма тытăнсан, вěсем çине пулеметсенчен пеме тытăннă. Ялти çынсене, çав шутра хěрарăмсемпе ачасене те, нумайăшне вěлернě. Ялти мěнпур çуртсемпе хуралтăсем çунса кайнă.

* * *

Совет Союзěн Ютçěршыв Ěçěсен Халăх Комиссарě В. М. Молотов юлташ Лондонра тата Вашингтонра пулни çинчен калакан хыпара мěнле кěтсе илни çинчен пур çěртен те çыраççě. Совет Союзěнчи ěççыннисем Совет Союзěпе Великобритани хушшинче тунă Договора пурте пěр саслăн ырлаççě. Рабочисем, колхозниксем, совет интеллигенцийě çакна палăртаççě: Совет Союзěпе Великобритани тата Америкăри Пěрлешÿллě Штатсем хушшинчи ÿссе пыракан боевой туслăх гитлерла Германие тата Европăри агрессиллě ěçсенче унпа çыхăннă государствăсене пěтěмпех çапса аркатас сехете çывхартать, теççě.

Мускаври «Красный пролетарий» заводри фрезеровщик Кривошеев юлташ, заводри мěнпур рабочисен шухăшне палăртса, çапла каланă: «Совет Союзěн, Великобританин тата Америкăри Пěрлешÿллě Штатсен пěрлешнě вăйěсем нимěçсен фашистла захватчикěсене çěр çинчен шăлса тăкěç, Европăри пусмăрланă халăхсене ирěке кăларěç», тенě.

Мускаври Государственнăй Университетăн пысăк аудиторийěнче профессорсем, преподавательсем тата студентсем темиçе пин çын пухăннă. «Гитлерла Германия, — тет Совет Союзěнчи Наукăсен Академийěн член-корреспонденчě, Сталинла премин лауреачě, профессор Ефимов, — хăйěн противникěсене пěрерěн-пěрерěн çапса аркатма шухăшланă, анчах та ирěке юратакан çěршывсем ăна пěрлешсе хирěç тăчěç. Ку договор ирěклěхшěн кěрешекенсене пурне те савăнтарать».

Калинин узелěнчи железнодорожниксен митингěнче машинист-лунинец Макаров юлташ сăмах тухса каланă. «Аслă державăсен Союзě, — тенě вăл, — гитлеровецсене 1942 çулта пěтěмпех çапса аркатě, ку тěлěшпе иккěленмелли çук. Вăл çапла пулатех»!

Чкалов облаçěнчи Н-ски заводри рабочисен митингěнче стахановка Бородянская юлташ çапла каланă: «Эпир, совет çыннисем, пирěн çěршывпа Великобританин тата Америкăри Пěрлешÿллě Штатсен хушшинчи боевой туслăх çирěпленнипе чěререн савăнатпăр. Тăшмана часрах та пěтěмпех çěнтермешкěн фронта мěн кирлине пурне те парас тесе эпир хамăр вăя шеллемěпěр».

Çар ěçне тăрăшса вěренеççě

СĚНТĚРВĂРРИ. Нумаях пулмасть всевобучăн Ăстакассинчи пунктěнче боецсен пěлěвěсене тěрěслерěç. Кирилл Кудрявцев, Леонид Коньков, Василий Никитин, Василий Магазинов, Васильев боецсем стройра çÿреме, винтовкăн материальнăй чаçěсене лайăх пěлни, гранатăна ывăтса тěл тивертме пултарни палăрчě.

Çар ěçне вěренекенсем хушшинче политрук Коньков юлташ час-часах калаçусем ирттерет. Юлашки хутра вăл отечественнăй вăрçă геройěсен паттăрла ěçěсем çинчен каласа кăтартрě. Боецсем программа тăрăх отлично вěренсе пыма, пăшал пемешкěн, граната ывăтмашкăн тăрăшса вěренме пулчěç.

А. Р.

Фронтовиксем патне парне

СОВЕТСКОЕ. Районри ěççыннисем Хěрлě Çар боецěсем патне парнесем яраççě. Николаевски ялсоветне кěрекен Сталин ячěпе тăракан колхоз фронтовиксем патне 9,5 килограмм çу, 75 çăмарта, 19 стакан махорка тата тăка пусса унăн какайне типěтсе янă. Çавăн пекех Салушнăри «Красный Октябрь» колхоз боецсене 55,2 килограмм сухан, 7,4 килограмм çу, 17,7 килограмм аш-какай, 4 килограмм махорка, 75 штука çăмарта, «Бархоткино» колхоз 70 çăмарта, 7 килограмм çу, 20 килограмм сухари, 10 килограмм аш-какай ярса пачěç.

Н. ПАХОМОВ.

Государствăна 1942 çулшăн тырă параççě

КАНАШ. **(Хамăр корр.).** Июнěн 11-мěш тěлне районри колхозсем государствăна 1942 çулхи обязательство шучěпе 554 центнер тěштырă панă. Вырăскас Пикшихри «Мотор» колхоз 132 центнер, «Хěрлě Çар» колхоз 30 центнер тěштырă панă. Янкăлчăри Каганович ячěпе тăракан колхоз государствăна 1942 çулшăн тырă тăратас обязательствăна 27 процент пурнăçланă. «Мотор» колхоз тырă панипе пěрлех 1942 çулхи обязательство шучěпе 766 килограмм кантăрвăрри леçсе панă.

П. НИКОЛАЕВ.

Германи çине çитес вăхăтра сывлăшран тапăнасси çинчен авиаци маршалě Гаррис калани

ЛОНДОН, июнěн 12-мěш. (ТАСС). Англин бомбардировка тăвакан авиацин командующийě авиаци маршалě Гаррис радио тăрăх сăмах тухса каланă. Нимěçсем вăрçа, — тенě вăл, — эпир хамăр çул çинче тăракан кирек кам çине те бомба пăрахма пултаратпăр, пирěн çине бомба пăрахма никам та пултараймасть, тесе ěненсе пуçларěç. Варшавăра, Роттердамра, Лондонра, Ковентрире, Плимутра тата ытти 50-шер пунктра вěсем çак сăмалттайла теорие пурнăçа кěртсе пычěç, — тенě Гаррис, — вěсем çил акрěç. Халě ěнтě вěсем çил-тăвăл вырса илеççě. Любек, Росток, Кельн—вěсем пуçламăшě çеç. Бомбардировка тăвакан авиацие иртнě вăхăтра пысăк мар масштабпа, вăрçă лару-тăрăвě кунсерен кăтартса панă тěллевсем çине бомба пăрахнă çěрте çеç усă курнă. Çакă вăл стратегиллě оборона евěрлě пулнă. Халě эпир стратегиллě наступленине ытларах та ытларах туса пыратпăр. Ан тив, гитлеровецсем Хěвеланăç еннелле тимлěн пăхса тăччăр. Унта вěсем чышкăран пысăках мар пěлěт татăкки курěç. Çак пěлěт татăкки хыçěнче Америкăри Пěрлешÿллě Штатсен мěнпур анлă вăйě тăрать. Çавăнпа пухăнакан çил-тăвăл хăйěн мěнпур хаярлăхěпе Германи çинче ахăрса кайě, вěсем, çěмěрттерекен урăган хушшинче çухалса кайнă çынсем пек, Любек, Росток тата Кельн кунěсене аса илěç, иртнě çулхи çăмăл çил çинчен шутласа пăхěç».

Англире çар производстви ÿсни

НЬЮ-ЙОРК, июнěн 12-мěш. (ТАСС). Англин производство министрě Литтлтон—Англире халě промышленноçри ěçсенче, çар службинче тата граждăнла оборонăра 22 миллион çын ěçлет, тесе каланă.

Промышленноçра ěçлекен 5,5 миллион хěрарăмсенчен 1,5 миллионне производствăна вăрçă вăхăтěнче явăçтарнă.

Англи халě, — тенě малалла Литтлтон, — çулталăкра танксем, çар автомобилěсем, механически транспортăн ытти машинисем 257.000 штука, 40.000 шултра калибрлă оруди тата 25 миллион снаряд туса кăларать. Çавăн пекех самолетсем туса кăларасси те 1940 çулти юлашки кварталтан пуçласа икě хут ÿсрě. Халě суту-илÿ суднисем те 1940 çулти юлашки кварталтинчен 57 процент ытларах туса кăларатпăр.

Вăрçă нушисем валли халě наци дохочěн 60 процентне яхăн расходланать.

Аргентина унăн танкерне торпедăланă пирки Германипе Италие протест панă

НЬЮ-ЙОРК, июнěн 11-мěш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви çапла пěлтерет: Аргентина унăн «Виктория» танкерне апрелěн 17-мěшěнче США çыранěсем çывăхěнче торпедăланă пирки Германипе Италие протест панă тесе Буэнос—Айресра официально пěлтернě. Правительствăн нотине пичетлесе кăларман, анчах та Аргентинăн ютçěршыв ěçěсен министерстви коммюнике кăларнă, унта çапла каланă: «Виктория» танкерăн вăл хăш çěршывăн танкерě пулнине кăтартакан паллăсем пулнă пулин те ун çине тапăннă. «Виктория» танкер çинче тупнă торпеда катăкě камăн пулнине экспертсем тěплěн палăртма пултарайман, анчах коммюникере çапла кăтартса панă: «Пур обстоятельствăсем те танкер çине тěнěл держависен шыв айěнчи кимми тапăннă, тесе шутлама май параççě» тенě.

Тěнěл держависен подводнăй лодки Испани пароходне çаратнă

НЬЮ-ЙОРК, июнěн 10-мěш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви çапла пěлтерет: тěнěл держависен подводнăй лодки Испанин Бильбаоран Кăнтăрти Америкăна каякан «Альдекоа» ятлă пароходне тытса чарнă, пароход çинчи сěрмелли çăва туртса илнě. Пароходăн капитанě çапла каланă: çăва вăйпа ирěксěрлесе туртса илсе кайрěç, тенě.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧЕБОКСАРСКИЙ ГОРКОМХОЗ

на основании существующих положений предлагает всем учреждениям, предприятиям и частным лицам, имеющим автомашины, моторные лодки, мотоциклеты, велосипеды, лодки, ялики, лошадей, коров и нетелей старше двух лет, в 10-дневный срок зарегистрировать на 1942 год в Горкомхозе, по ул. К. Маркса, д. № 4 и получить соответствующий документ.

ЧЕБОКСАРСКИЙ ГОРКОМХОЗ

доводит до сведения всех учреждений, предприятий и частных лиц, что регистрация велосипедов, лодок, гужтранспорта производится ежедневно с 14 часов до 17 часов в здании Г. К. Х. по улице К. Маркса, д. № 4.

ЧУВАШСКОМУ ТРЕСТУ ТОРГПЛОДООВОЩ

требуются: зоотехник, техник-строитель, товароведы, работник по снабжению, бухгалтер-ревизор, юрисконсульт, слесаря, шофера.

Обращаться по адресу: г. Чебоксары, ул. Свердлова, 35.

3—1.

РЕДАКЦИ АДРЕСĚ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарěн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайěн — 5—31, ялхуçалăх пайěн — 3—99, комсомол пурнăç пайěн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 512

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6. 58 64 п. л.